**Пур-ши пурнăç Марс çинче?**
Хĕрлĕ Марс Çĕр çине пăхать,
Пурне те шухăша ярать.
Хĕрлĕ çутăпа вăл çиçет,
Вăрçă Турри ăна хӳтĕлет.
Çӳллĕ тусем ун çинче,
Вăйлă çил-тăвăл вĕçтерет,
Çук унта юхан-шыв, çырмасем,
Хĕлле те, çулла та – пăрсем.
Пур-ши пурнăç Марс çинче?
Никам та пĕлмест тупсăмне.
Анчах та шанатăп, хам ĕмĕтсенче
Курăп вĕçсе çак планета çине.
**Альберт Данилов.**
**Канаш районĕ, Катек шкулĕ.**

Тĕрлĕ тĕслĕ астрăсем
Пахчана илем кӳреççĕ,
Хĕвелçаврăнăшĕсем
Кайăксене илĕртеççĕ.
Сарă кĕпшĕлсем те
Çак савăнăçа кĕтеççĕ:
«Часрах, часрах
Пулса çиттĕр мăйăр», – теççĕ.
**Елена Григорьева.**
**Шупашкар, 4-мĕш гимнази**

Урамра паян хитре –
Килчĕ ылтăн кĕркунне.
Сарă-хĕрлĕ çулçине
Эп çыхатăп пуххине.
Парнелетĕп аннене,
Ил, тархасшăн, çыххине.
Сана валли кĕркунне
Сапаларĕ çулçине.
**Валерия Васильева.**
**Канаш, 6-мĕш шкул.**

Ăслăлăх çурчĕ – юратнă ман шкулăм,
Ятлă-сумлă, мухтавлă та хӳхĕм!
Эсĕ пирĕн хаваслă ачалăх, яш ӳсĕм,
Пурнăçри ăнтăлу, пуласси, таса туйăм.
**Саша Павлов.**
**Çĕнĕ Шупашкар, 9-мĕш шкул.**

Ĕмĕтсем ман пысăк,
Умра ĕç нумай:
Электрик эп пулăп
Вĕренсен нумай.
**Никита Ефимов.**
**Канаш районĕ, Шăхасан шкулĕ.**

Çырнă поэт Иванов
«Нарспи» ятлă поэма,
Çакăнта вăл кăтартнă

Чăваш пикин илемне.
Çак илеме юратать
Сетнер ятлă яш каччă.
**Надежда Андреева.**
**Шупашкар, 38-мĕш шкул**

Хĕвел йăл-йăл кулчĕ,
Çутатрĕ пĕтĕм таврана,
Манăн чунăм та çуталчĕ
Çуркуннешĕн савăнса.
Ача-пăча шыв юххинче
Карапсене юхтарать,
Карап хыççăн чупа-чупа
Хăй те лачкам шыв пулать.
**Максим Леонтьев.**
**Çĕнĕ Шупашкар, 20-мĕш шкул.**

Манăн юратнă кĕркунне
Вăл шăппăн чĕнет пире.
Эпĕ ăна юрататăп,
Вăл çитнишĕн савăнатăп.
Ачасем шкула каяççĕ,
Уроксем тĕплĕн тăваççĕ.
Манăн шанчăклă туссем,
Сунап сире пиллĕксем.
**Павел Андреев.**
**Шупашкар, 37-мĕш шкул.**

Çитрĕ ĕнтĕ ак хĕлле,
Урамра шап-шурă.
Туллиех ача-пăча
Хĕвĕшет тăвайккинче.
**Татьяна Алексеева.**
**Çĕнĕ Шупашкар, 13-мĕш шкул.**

Сукмакпа утатăп хирелле,
Киленетĕп хĕл илемĕпе.
Шур юртан тăватăп кĕлетке,
Ах, мĕнле илемлĕ çут тĕнче!
**Юля Скоробогатова.**
**Çĕнĕ Шупашкар, 9-мĕш шкул.**

Уйăпсем вĕçсе килеççĕ,
Шур юр пĕрчисем ӳкеççĕ,
Ача-пăча ярăнать,
Кам пĕлет, хăçан пулать?
**Рома Прокопьев.**
**Çĕнĕ Шупашкар, 9-мĕш шкул.**

Килсе çитрĕ хăнана
Ылтăн кĕркунне.
Çулçăсем йĕри-тавра
Илем кӳреç вăрмана.
Темĕн тĕсли пур вĕсем:
Саррисем те хĕрлисем...
Ах, ытла илемлĕ-çке

Çакă ылтăн кĕркунне!
Ак тата кăштах утсан
Куртăм эпĕ чĕрĕпе,
Вăл вара савăннипе
Пуçтарать кĕр кăмпине.
Тата пуян кĕркунне
Парать тĕрлĕ çимĕçне:
Çĕр улмине, кăшманне,
Кишĕрне, купăстине...
**Анна Алексеева.**
**Шупашкар, 37-мĕш шкул.**

Кушак, кушак –
Пиç-пиç-пиç, Мăр-мяук,
Сĕт юрататăн-и?
Кушак, кушак –
Мăр-мяук, пиç-пиç-пиç,
Пулă юрататăн-и?
Кушак, кушак –
Пиç-пиç-пиç, Мăр-мяук,
Выляма юрататăн-и?
Кушак, кушак –
Пиç-пиç-пиç, Мăр-мяук,
Çывăрма эс юрататăн-и?
**Софья Глушкова.**
**Шупашкар, 4-мĕш гимнази.**

Пысăк пĕлӳллĕ пулма тăрăшатăп,
Шкул ӳсĕмсем тунипе мухтанатăп,
Уяв ячĕпе чĕререн саламлатăп,
Ырă ятна малалла эп тасатăп.
**Даниил Афанасьев.**
**Çĕнĕ Шупашкар, 9-мĕш шкул.**

Çуркунне çитрĕ,
Хĕвел хĕртсе пăхать.
Унăн ăшшине туйса
Юрĕ ирĕлет.
Кайăксем юрлаççĕ,
Йăва çавăраççĕ.
Вĕсен юррине илтсе
Çынсем савăнаççĕ.
**Инна Николаева.**
**Çĕнĕ Шупашкар, 13-мĕш шкул**

Акă çитрĕ çуркунне,
Хĕвел пăхрĕ ăшăтса.
Кайăк сасси ялсенче
Янăрарĕ шăранса.
Симĕс курăк ешерет,
Уйра путек сиккелет,
Вăрманĕ те кунсерен
Хитре тумтир тăхăнать.
**Анна Васильева.**
**Шупашкар, 61-мĕш шкул**

Иртсе кайрĕ сивĕ хĕл,
Çитсе тăчĕ ăшă çур,
Хăйĕн савăк ăшшипе,
Çепĕç кайăк сассипе.
**Виктория Васильева.**
**Çĕнĕ Шупашкар, 20-мĕш шкул**

Килсе çитрĕ çуркунне
Хĕвел ячĕ ăшăтса.
Аслă ялăн хĕррипе
Шывĕ юхрĕ шарласа.
Вĕçсе килчĕç кайăксем
Савнă Тăван çĕр-шыва,
Ăсталарĕç йăвасем
Чĕпписене кăларма.
**Мария Окружнова.**
**Канаш, 10-мĕш шкул**

Хĕвел савăнса кулать,
Шурă юр та ирĕлет,
Урам тăрăх шыв юхать –
Часах çуркунне çитет.
Шăнкăрч та вĕçсе килет,
Юррине шăрантарать.
Курăк-чечек ешерет –
Çут çанталăк чĕрĕлет.
**Мария Андреева.**
**Шупашкар, 18-мĕш шкул**

Çитрĕ кĕркунне,
Садсем саралчĕç,
Хурăн çулçисем,
«Ылтăн» пек çунаççĕ,
Сар кайăк юрри
Илтĕнмест,
Кайăксем вĕçсе кайнă
Инçете-инçете.
**Лера Миронова.**
**Шупашкар, 37-мĕш шкул.**

**Пĕрремĕш юр**
Шурă юрĕ çурĕ, çурĕ…
Хура çĕре шуратрĕ,
Таврана вăл илемлетрĕ,
Çĕнĕ ĕмĕт парнелерĕ.
Йĕлтĕр çине тăтăм та
Эпĕ тухрăм урама.
Çĕнĕ юрпа савăнма,
Çанталăкпа киленме.
Манăн умра уй-хирĕм
Шурă юрпа витĕннĕ.
Эх, аван-çке йĕлтĕрпе
Ярăнмашкăн çĕн йĕрпе!
**Саша Никитин.**
**Çĕнĕ Шупашкар, 20-мĕш шкул.**

Манăн хаклă çыннăм
Пĕр эсĕ, анне.
Эпир ирĕн-каçăн
Санпала пĕрле.
Эс юрататăн
Халап калама,
Мана пулăшатăн
Ӳкерчĕк тума.
**Артем Григорьев.**
**Шупашкар, 4-мĕш гимнази.**

Çуралнă кун ячĕпе
Чунтан саламлатăп.
Çирĕп сывлăх, телейпе
Юрату анчах сунатăп.
Малаллахи пурнăçăр
Тĕрĕс-тĕкел шутăр,
Ĕçĕрте те килĕрте
Ăнăçулăх пултăр.
Çӳл тӳпери сар хĕвел
Ăшшăн пăхтăр яланах,
Çутă уйăх, çăлтăрсем
Пыччăр çутатса çулна.
**Таня Пудейкина.**
**Шупашкар, 53-мĕш шкул.**

Акă çитрĕ кĕркунне
Сарă, ылтăн тумĕпе.
Вĕçсе кайрĕç кайăксем
Ăшă кăнтăр еннелле.
**Дима Яковлев.**
**Çĕнĕ Шупашкар, 2-мĕш шкул.**

Мамăк евĕр юр ӳкет.
Çутă-çутă çăлтăрсем.
Юр ӳкет те ирĕлет.
Тута çинче пĕрчĕсем.
**Кира Кривошеева.**
**Çĕнĕ Шупашкар, 20-мĕш шкул.**

**Кĕтрĕм хĕллене**
Кĕтрĕм, кĕтрĕм хĕллене,
Хатĕрлерĕм йĕлтĕрне.
Кĕрхи çулçă час ӳкмерĕ,
Шурă юрĕ те вĕçмерĕ.
Ак вăрантăм ирхине –
Курах кайрăм хĕллене:
Шур çăматă тăхăннă,
Йӳле янă кĕрĕкне.
Чĕнсе илнĕ хай патне
Çил çунатне – тăманне,
Юр пике те çавăнтах,
Таш ташлаççĕ савăнсах.
**Ксения Николаева.**
**Канаш районĕ, Катек шкулĕ.**

**Пĕчĕк йăмăк**

Манăн пĕчĕк йăмăк пур,
Вăл илемлĕ те маттур.
Ăна эпĕ юрататăп,
Теттесем илсе паратăп.
Ячĕ унăн пит хитре –
Анжелика-чиперкке.
Савăнăç кӳрет пире
Шăнкăрав пек сассипе.
Кушака пит юратать вăл,
Кушакки те савăнать-тăр.
Эх, пуçлаççĕ çаврăнма,
Ывăниччен выляма –
Савăк вĕсене пăхма.
Тĕлĕнеп çав хушăра:
Пĕчĕк йăмăк кушака
Тăрмалать хыт юратса.
**Даша Корнеева.**
**Çĕнĕ Шупашкар, 13-мĕш шкул.**

Шурă, шурă юр пĕрчи
Çаврăнса вĕçет.
Шур сухаллă Хĕл Мучи
Пите чĕпĕтет.
**Дима Яковлев.**
**Çĕнĕ Шупашкар, 2-мĕш шкул.**

Эпĕ тухрăм урама
Юлташăмпа выляма.
Илсе тухрăм çунашка –
Пысăк йывăç валашка.
Ярăнтăмăр тусăмпа –
Чи çывăх юлташăмпа.
Кĕтĕмĕр кайран киле
Чей ĕçме варенипе.
**Олег Митрофанов.**
**Канаш районĕ, Катек шкулĕ.**

Пит хитре хĕл кунĕсем –
Савăнаççĕ ачасем:
Çунашкапа ярăнаççĕ,
Йĕлтĕр йĕрĕсем хываççĕ,
Спортпа туслă пурăнаççĕ,
Сывлăха çирĕплетеççĕ.
**Галина Васильева.**
**Шупашкар, 50-мĕш шкул.**

Кĕçех çитĕ Çĕнĕç çул –
Чунтан кĕтекен уяв.
Эп кĕтетĕп парнесем
Асамлă Хĕл Мучинчен.
**Татьяна Алексеева.**
**Çĕнĕ Шупашкар, 13-мĕш шкул.**

Вĕçен кайăк хĕл каçма
Вĕçсе кайрĕ кăнтăра.

Вĕтĕ çумăр чарăнмасть,
Пĕрĕхет чӳречерен.
Хирсенче халь хуп-хура,
Сĕм вăрман та çаралать.
Хыр çинчи ула курак
Тем çинчен хыпар калать.
**Даша Лютая.**
**Çĕнĕ Шупашкар, 20-мĕш шкул.**

**Çерçи**
Кĕтнĕ хĕл те çитрĕ.
Вăхăт тек шăвать.
Сивĕтрĕ. Шыв шăнчĕ.
Шурă юр çăвать.
Ирсерен пăхатăп
Эп чӳречерен,
Савăнса сăнатăп
Йăрă çерçие.
Манăн пĕчĕк тусăм
Хăрамасть хĕлрен:
Ăшăнма вăл тупнă
Шăнкăрч йăвине!
Йăпăр-япăр кĕчĕ
Хăйĕн «çĕн пӳртне» –
Ăшăнĕ çерçийĕм
Çуркуннеччченех!
Кашни кун хуратпăр
Шăллăмпа эпир
Сырăша тем те пĕр –
Тырă, салă, вир.
**Илья Скворцов.**
**Çĕмĕрле, 3-мĕш шкул.**

**Эп – хула ачи**
Эп çуралнă, эп çуралнă,
Эп çуралнă хулара.
Эп çӳретĕп, эп çӳретĕп
Хулари шкула.
Пирĕн шкул илемлĕ,
Пысăк та пуян,
Вĕрентӳçĕсем те
Тăрăшаç  ялан.
Вĕренекенсем те
Маттур ачасем,
Пурте тăрăшаççĕ
Вĕренме вĕсем.
**Софья Вастулова.**
**Шупашкар, 64-мĕш шкул.**

Лапка-лапка юр çăвать,
Çĕре майĕпен ӳкет.
Илет хĕл хăй ытамне
Пĕтĕм çутă тĕнчене.
Каçсерен çав урама
Эп тухатăп уçăлма,
Алтăр-çăлтăр, ав, мана

Куç хĕсет самантлăха.
Екатерина Пушкина.
Шупашкар районĕ, Хыркасси.

Автан
Автан тăрать иртерех,
Авăтать вăл хитререх.
Çĕнĕ çулпа саламлать –
Автан çулĕ пуçланать.
Автан сарă та пулать,
Автан шурă та пулать.
Авăтать вăл кулленех,
Телей сунать çынсене.
Автан мĕншĕн савăнать?
«Кук-ку-ру-кук» авăтать.
Настя Медведева.
Шупашкар, 28-мĕш шкул.

Шап-шурă юр йăлтăртатать,
Ачасене савăнтарать.
Ытла асамлă-çке хĕлле,
Илемлĕ, шурă, илĕртӳллĕ!
Юр пĕрчи умра вĕçет,
Пире савăнăç кӳрет.
Йĕлтĕрпе ачасем ярăнаççĕ,
Чăрăш тавра та ташлаççĕ.
Артем Иванов.
Çĕнĕ Шупашкар, 20-мĕш шкул.

Акă çитрĕ сивĕ хĕл
Таврана вăл капăрлатрĕ,
Шурă юрĕ вĕл-вĕл-вĕл,
Хура çĕре шуратрĕ.
Çуна çине лартăм та
Тăвайккинчен ярăнтăм,
Уй-хирелле пăхрăм та
Тавралăхпа савăнтăм.
Артем Шишкин.
Шупашкар районĕ, Хыркасси.

Анне – чи ырă сăмах çĕр çинче,
Лăпкать вăл ачашшăн кашнин чĕрине.
Сыхлар, мухтанар, юратар аннене –
Ун чух пурнăç пулĕ аван ĕмĕрне.
Кирилл Никифоров.
Çĕнĕ Шупашкар, 13-мĕш шкул.

Хĕллехи савăнăçсем
Вĕлтĕр, вĕлтĕр юр пĕрчи
Вĕçрĕ, вĕçрĕ тӳпере.
Ачасене савăнма
Вĕçсе ӳкрĕ çĕр çине.
Акă тухрĕç ачасем
Çунашкапа, йĕлтĕрпе.
Хатĕрлеççĕ конькисем
Пăр çинелле вĕçтерме.

Юрĕ çемçе, кăпăшка,
Ачасем те хаваспа
Йăвалаççĕ юр чăмми
Пĕр-пĕрне перкелешме.
**Дима Яковлев (Мĕтри).**
**Çĕнĕ Шупашкар, 2-мĕш шкул.**

Çĕнĕ çул çитсе пырать,
Хĕл Мучи çула тухать.
Инçетрен ун çитмелле,
Парнесем валеçмелле.
**Егор Антонов.**
**Канаш районĕ, Катек шкулĕ.**

Асар-писер çил-тăман –
Кун пекки нихçан пулман.
Питĕ сивĕ урамра –
Ăшă тум тăхăнмалла.
Йывăçсем шăнса пăрланнă,
Кайăксем йăлтах аптранă.
Сырăш ту вĕсем валли,
Пултăр вăл ялан тулли.
**Степан Николаев.**
**Çĕнĕ Шупашкар, 9-мĕш шкул.**

Вĕçсе кайрĕç кайăксем
Ăшă кăнтăр еннелле.
Кĕркунне те иртрĕ,
Çитрĕ сивĕ хĕл.
**Катя Анатольева.**
**Çĕнĕ Шупашкар, 2-мĕш шкул.**

Юр çăвать, юр çăвать,
Тухăр ачасем!
Илер çунашка –
Каяр ярăнма!
**Артем Быков.**
**Çĕнĕ Шупашкар, 20-мĕш шкул.**

Çакă çутă тĕнчере
Пурăнмашкăн эп хавас.
Ирех тăрап, тумланап,
Вырăнсене пуçтарап,
Пит çăвап, яшка çиеп,
Сумка хăвăрт хатĕрлеп –
Шкула тухса вĕçтереп.
Шкулти пурнăç аптрамасти –
Вĕренмешкĕн эп хавас.
**Яна Лисаева.**
**Шупашкар районĕ, Хыркасси.**

**Питĕ лайăх!**
Шурă юр çăвать ирпе,
Вăл хуплать хитрен çĕре.
Ак тухаççĕ ачасем –
Илсе тухаç çунасем.

Алла-аллăн тытăнса
Ярăнаççĕ савăнса.
Тав тăваççĕ хĕллене:
– Питĕ лайăх, ĕненсем!
**Аделия Иванова.**
**Канаш районĕ, Катек шкулĕ.**

Тăрăшатăп пыл çиме –
Сывлăха çирĕплетме,
Юрататăп чейпеле.
Тав тăватăп пыл хуртне.
**Юлия Петрова.**
**Çĕнĕ Шупашкар, 9-мĕш шкул.**

Анне чăрăш илемлетет –
Хĕл Мучи кунта килет.
Юр пике пĕрле килет,
Пирĕн кăмăла çĕклет.
**Евгений Кудрявцев.**
**Шупашкар, 64-мĕш шкул.**

Питĕ туслă ман çемье:
Ăс парать мана атте,
Питĕ хитре ман анне –
Юрататăп вĕсене.
Манăн шăллăм алхасать –
Вăл та пире юратать.
Антон Мушков.
Çĕнĕ Шупашкар, 8-мĕш шкул.

Чăрăш илемлетрĕмĕр,
Ырă туйăм чĕртрĕмĕр,
Юрăсем юрларăмăр,
Сăвăсем каларăмăр,
Савăнсах ташларăмăр.
**Юля Степанова.**
**Çĕнĕ Шупашкар, 9-мĕш шкул.**

Эпĕ шкулта вĕренетĕп,
Кулленех унта çӳретĕп.
Мана шкулта килĕшет,
Ăс-тăн кашни кун кĕрет.
**Юлия Данилова.**
**Шупашкар, 50-мĕш шкул.**

Хĕр ача шкула каять,
Сумкине хăй пуçтарать.
Тăхăнать вăл кĕрĕкне
Тата ăшă çăматне.
Тулта сивĕ хĕл кăçал,
Юрĕ те вара нумай.
Çĕнĕ йĕлтĕрпе чупма
Питĕ меллĕ кун паян.
Хĕллехи кунта ялан
Савăнса вылять ача.
Тасатать вăл пăр çийне,

Ярӑнать конькипеле.
Ҫӗн ҫула хатӗрленсе
Юртан кӗлетке тӑвать.
Ӑна сӑрпа пӗветет,
Хӗл Мучине вӑл кӗтет.
**Лера Петрова.**
**Ҫӗнӗ Шупашкар, 2-мӗш шкул.**

Ҫитрӗ, ҫитрӗ вӗт хӗлле:
Юр йӑлтӑркка каҫхине,
Ҫунашка манӑн  хитре,
Хӗрлӗ тӗс ҫиҫет питре.
**Евгений Кудрявцев.**
**Шупашкар, 64-мӗш шкул.**

Анне пире юратать,
Тем тума та пулӑшать.
Юрататӑп аннене,
Пурӑнтӑр вӑл ӗмӗрех!
**Павел Федоров.**
**Елчӗк районӗ, Елчӗкри шкул.**

Кӗркунне мӗнле хитре:
Йывӑҫсем илемлӗ,
Урамра пӗрмай тӗтре,
Ҫулҫӑсем тем тӗрлӗ.
Кайӑксем вӗҫсе каяҫ
Ӑшӑ кӑнтӑра.
Питӗ хытӑ юратап,
Кӗркунне, сана!
**Дарья Скворцова.**
**Шупашкар, 37-мӗш шкул.**

Сар хӗвел ӑш шевлине
Сапаларӗ савӑнса.
Ма тесессӗн аннене
Патӑм юрӑ юрласа.
Пӑхрӑм та анне ҫине –
Сар хӗвел пек ун кулли.
Ма тесессӗн ман анне
Ҫӗр ҫинче чи илемли!
**Екатерина Петрова.**
**Канаш, 1-мӗш шкул.**

Кашни ир шкулаваскатпӑр,
Эпир унта вӗренетпӗр
Вулама, ҫырма, шутлама.
Питӗ лайӑх-ҫке шкулта
Пӗлӳ илме те ӑс пухма.
**Татьяна Алексеева.**
**Ҫӗнӗ Шупашкар, 13-мӗш шкул.**

Сар кӗркунне хыҫҫӑн ҫитрӗҫ сивӗсем,
Шурӑ юрӗ шӑппӑн ӳкрӗ ҫӗр ҫине.
Каскӑн ҫилӗ вӗрчӗ сивӗ ҫурҫӗртен,
Ҫӗр питне хупларӗ – шап-шурах тӗнче.

Кайăксем шаккаççĕ шăннă кантăкран,
Пулăшу ыйтаççĕ çынсенчен, манран.
Сивĕ Хĕл Мучийĕ чĕпĕтет пите,
Пурпĕрех юлташăм выляма чĕнет.
Йĕлтĕрпе васкатпăр эпĕр вăрмана,
Сăртран вирхĕнетпĕр – сивĕ мар мана.
**Михаил Архипов.**
**Шупашкар районĕ, Хыркасси.**

Хĕлле эпĕ савăнатăп,
Сырăшсем туса çакатăп:
Уйăп, кăсăя валли
Хатĕр халĕ çимелли.
**Настя Ястребова.**
**Çĕнĕ Шупашкар, 9-мĕш шкул.**

Ача-пăчашăн мĕн кирлĕ?
Ашшĕпе-амăшĕ кирлĕ.
Ашшĕпе-амăшне  мĕн кирлĕ?
Ачасен пуласлăхĕ кирлĕ.
Кукамăшпе кукашшĕне мĕн кирлĕ?
Канлĕ ватлăх кирлĕ.
**Сергей Когинов.**
**Çĕнĕ Шупашкар, 8-мĕш шкул.**

Манăн пур кушак çури –
Лайăх, тимлĕ те хитре.
Чашăкран вăл сĕт ĕçет,
Яланах шăши тытать.
Никамран та хăрамасть,
Пӳртре чупма чарăнмасть,
Кăмака çинче çыврать,
Пире питĕ юрататать.
**Екатерина Горшкова.**
**Шупашкар районĕ, Хыркасси.**

Çурхи хĕвел ялкăшса
Йăл-йăл çиçрĕ тӳпере,
Ача-пăча савăнса
Чупса ухрĕ сăрт тăрне.
Кунта курăк ешерет
Юрĕ часрах пĕтнĕрен,
Епле сăрчĕ хĕпĕртет
Ача-пăча килнĕрен.
**Ольга Сергеева.**
**Шупашкар, 61-мĕш шкул**

Манăн анне пит маттур,
Пур ĕçре те вăл правур.
Юратап ăна чунтан:
Мана лайăх эс пуртан.
Хисеплеç ман аннене
Хăй юратнă ĕçĕнче.
**Сергей Ильин.**
**Елчĕк районĕ, Елчĕкри шкул.**

Пĕчĕк йăмăкăм чирленĕ,
Пичĕ-куçĕ веç хĕрелнĕ.
Мĕн амакĕ йăмăкпа?
Мĕн-ши пулнă халь унпа?
Тухтăр килчĕ, тĕрĕслерĕ,
«Пылак çимĕç ан çи», – терĕ.
Манăн йăмăк унтанпа
Туслă мар пылакпала.
**Вера Петрова.**
**Çĕнĕ Шупашкар, 9-мĕш шкул.**

Манăн анне чи хитри,
Чи сăпайли, чи ырри.
Ĕçлеме вăл юратать,
Хăш чух питĕ ывăнать.
Çавăнпа та аннене
Пулăшатăп  час-часах:
Шыв йăтса, урай шăлса,
Савăт-сапана çуса.
**Николай Антипов.**
**Шупашкар, 50-мĕш шкул.**

Аннен алли – ăшă,
Аннен куçĕ – çутă,
Аннен юмахĕ – тĕлĕкре,
Аннен юнĕ – манра,
Анне яланах манпа,
Аннене тайма пуç яланах!
**Анна Ратушная.**
**Çĕнĕ Шупашкар, 20-мĕш шкул.**

Юрататăп аннене,
Саламлатăп аннене,
Мартăн 8-мĕш тĕлне
Хатĕрлерĕм эп парне.
**Женя Автайкина.**
**Çĕнĕ Шупашкар, 5-мĕш шкул.**

Çурхи кунăн ăшшипе
Шурă юрĕ ирĕлет.
Кайăксем таврăннипе
Çурхи юрă илтĕнет.
Ăш хĕвелĕ пăхнипе
Ўсен-тăран чĕрĕлет.
Тăр-тăри юрланипе
Чун ăшăнса çĕкленет.
**Артем Трофимов.**
**Шупашкар, 61-мĕш шкул**

Акă çитрĕ çуркунне,
Çанталăк та ăшăтать.
Вĕçсе кайрĕç уйăпсем –
Пирĕн хаклă тусăмсем.
**Павел Субботин.**
**Шупашкар, 4-мĕш гимнази.**

Аннене эп саламлатӑп,
Чун-чӗререн тав тӑватӑп
Мӗн пӗчӗкрен лӑпкаса
Ӳстернӗшӗн юратса.
Хӑш чухне итлеменнишӗн
Каçарсам мана, анне.
Ӑс-тӑн парса вӗрентнишӗн
Тайма пуç сана, анне!
**Альберт Данилов.**
**Канаш районӗ, Катек шкулӗ.**

**Çурхи уяв**
Кашни уяв çитмессерен
Тулать савӑнӑçпа чӗрем.
Паян уяв хӗрарӑмсен –
Асаннесен те аннесен.
Кукамайпа асаннене
Саламлӑпӑр çемйипелех!
Йӑмӑксене, аппасене
Сунатпӑр ӑнӑçу, телей!
Çитет куллен хӗвеллӗ ир,
Аннеçӗм вӑрататъ мана:
«Ман пӗчӗк ывӑлӑм, тӑрсам,
Асаннӳне саламлама!
Парнелӗн тутӑр юратса,
Ан ман эс юрӑ юрлама!»
Аттепеле пичче вара
Торт парнелерӗç аннене,
Вӗсем тухмасӑр кухньӑран
Апат пӗçерчӗç кунӗпе:
Пылак кукӑльсем, хуплу,
Салат, сар чӑх яшки, шаркку...
Аннеçӗм, савӑн! Кӗрекӳ
Сан пултӑр яланах тулли!
**Илья Скворцов.**
**Çӗмӗрле, 3-мӗш шкул.**

Асанне ирех тӑрать,
Апатне лартса ярать,
Пахчара йӑран çумлать,
Мӑнуксемпе савӑнать.
Ӑна питӗ юрататӑп,
Пӗрле юрӑсем юрлатӑп,
Асаннене пулӑшатӑп,
Савӑт сапа эп çӑватӑп.
**Валерия Васильева.**
**Канаш, 6-мӗш шкул.**

**Юр пӗрчи**
Тавралӑхри шур витти –
Йӑлтӑр-ялтӑр юр пӗрчи –
Куç умне тухса тӑрать,
Юмахри пек туйӑнать.
Хӗл илемне кӳрекен
Тӗлӗнтермӗш юр пӗрчи
Эрешлет кантӑксене –

Савăнтарать çынсене.
Пĕчĕкскер сив чиперкке
Ирĕлет ман пит çинче.
Юр пĕрчисен хушшинче
Пĕрешкелли çук теççĕ.
Пурте вĕсем пит хитре –
Мерчен пекех çиçеççĕ!
Манăн пит пĕлес килет:
Кам-ши кĕртсемпе ĕçлет?
Вĕçтерет юр пĕрчине?
Илем кӳрет тĕнчене?
Тен çӳлте, пит аякра,
Юра тăваç заводра?
**Наталья Егорова.**
**Шупашкар, 1-мĕш гимнази.**

Çурхи кунсем çитнĕçем
Пăхрĕ хĕвел ăшăтса,
Сарă хĕвел хĕртнĕçем
Шывĕ юхрĕ талхăрса.
Вăрăмланчĕç кунăсем,
Вĕçсе килчĕç кайăксем,
Кураксемпе шăнкăрчсем
Çавăраççĕ йăвасем.
**Дима (Мĕтри) Яковлев.**
**Çĕнĕ Шупашкар, 2-мĕш шкул.**

Пирĕн çумри вăрманта
Шăпчăк кайăк пурăнать.
Çепĕç юрă юрласа
Пирĕн чуна хăпартать.
**Татьяна Алексеева.**
**Шупашкар, 50-мĕш шкул.**

Çăмламас кушак çури
Илĕртӳллĕ çав тери:
Манăн пĕчĕк мерекке,
Ытарма çук чиперкке.
Кушак çури шав вылять,
Чăкăл-макăл вăл тăвать.
Пур çĕрте те тустарать,
Пӳлĕмре йăлт пăтратать.
**Полина Ткачева.**
**Çĕнĕ Шупашкар, 9-мĕш шкул.**

Шăнкăрч вĕçсе килнĕ
Хăйĕн «кив пӳртне»,
Тасатать ăна вăл
Çут уяв тĕлне.
Ир-ирех тăрать вăл –
Тăрăшать куллен,
Юррине юрлать хăй,
Савăнать-и, тен?
**Илья Скворцов.**
**Çĕмĕрле, 3-мĕш шкул.**

Аннеçӗм, анне,
Ырӑ чунлӑ анне!
Пӗлетӗн-ши эсӗ
Хӑв мӗн хак тӑнине.
Çук, пӗлеймӗ никам та
Тӑван анне хакне…
Çук, сутмӗ нихçан та
Никам та тӑван амӑшне.
**Ярослав Ильин.**
**Çӗнӗ Шупашкар, 20-мӗш шкул.**

**Çуркунне**
Çур çитнине палӑртса
Хӗвел хӗртме пуçларӗ.
Шурӑ юрӗ ирӗлет –
Кӳлленчӗксем капланчӗç.
Ача-пӑча савӑнса,
Хутран пӑрахут туса,
Ӑна шыва пӑрахса
Чупса çӳрет хыçалтан.
Кайӑксем те кӑнтӑртан
Вӗçсе килчӗç васкасах.
Часрах чӗпӗ кӑларма
Йӑва тӑваç хыпӑнсах.
Ӳсен-тӑран чӗрӗлет,
Симӗс тумтир тӑхӑнать.
Хирте, килти пахчара
Хӗрӳ тапхӑр пуçланать.
**Лера Петрова.**
**Çӗнӗ Шупашкар, 2-мӗш шкул.**

Туссене эп юрататӑп,
Вӗсемпе эп савӑнатӑп.
Пулӑшатпӑр пӗр-пӗрне,
Хирӗçсессӗн те пӗрле.
Тус пурри-çке пит аван –
Хӑв тусна нихçан ан ман!
**Валентина Груздева.**
**Çӗнӗ Шупашкар, 9-мӗш шкул.**

Акӑ çитрӗ çуркунне –
Хӗвел савать тӗнчене!
Шӑнкӑрч юрлать юррине,
Савӑнтарать кашнине.
**Иван Архипов.**
**Шупашкар, 4-мӗш гимнази.**

Хӗвел пӑхать ӑшӑтса,
Тумла тумлать васкаса,
Ача-пӑча урамра
Вылять çурхи шывпала.
**Егор Антонов.**
**Канаш районӗ, Катек шкулӗ.**

Ваня çурхи пахчара
Шӑварать кабачока.

– Ӳс кабачок, пысӑк пул,
Кавӑнран кая ан юл.
**Софья Пахомова.**
**Çӗнӗ Шупашкар, 20-мӗш шкул.**

Картишӗнче чӑпар чӑх
Кунӗпех кӑтиклетет:
– Турӑм эпӗ çӑмарта –
Халь манӑн çиес килет.
Сарӑ тулӑ пӗрчине
Юратать-çке чӑпар чӑх,
Çавӑнпа сар çӑмарта
Парнелет куллен çак чӑх.
**Александр Мышьяков.**
**Çӗнӗ Шупашкар, 20-мӗш шкул.**

Эп çуралнӑ çуркунне –
Ӑшӑ ака уйӑхӗнче.
Саламлать мана анне –
Кулли çиçет питӗнче.
**Рома Григорьев.**
**Шупашкар, 4-мӗш гимнази.**

Ялтах пурӑнма аван –
Ирех вӑратать автан,
Ӗне, сурӑх макӑрать,
Улӑха тухмаваскать.
**Данил Журавлев.**
**Çӗнӗ Шупашкар, 9-мӗш шкул.**

Аттепе аннеçӗм
Юратса мана
«Шӑнкӑрчӑм» тееççӗ
Йӑрӑ пулнӑран.
Йӑмӑка чӗнеççӗ
«Шӑпчӑкӑм» тесе.
Пурӑнатпӑр эпӗр
Туслӑ çемьере!
**Илья Скворцов.**
**Çӗмӗрле, 3-мӗш шкул.**

Çитрӗ, çитрӗ çуркунне!
Ытараймӑн ун шавне:
Улӑхра сикет путек,
Сарӑ чӗпсем çӑмха пек.
Уй тӳпинче, ирӗкре
Юр юрлаççӗ тӑрисем,
Пахчари хурӑн çинче
Савӑнаççӗ шӑнкӑрчсем.
Сӗртӗнеççӗ хӳрипе
Хӗвеле шур пӗлӗтсем.
Ӑшӑ çилӗ  вӗрнипе
Йӑл кулаç кӳленчӗксем.
**Катя Мельникова.**
**Çӗнӗ Шупашкар, 20-мӗш шкул.**

Çуркунне çитсе пырать,
Хĕвел хытă çутатать,
Ăшă çилĕ варкăшать –
Çут çанталăк вăранать.
Вăрманти шăтăкĕнчен
Упа вăранса тухать,
Кайăк-кĕшĕк сассипе
Вăрман кунран-кун тулать.
**Аделия Иванова.**
**Канаш районĕ, Катек шкулĕ.**

Манăн пысăк çемьере
Пур аппа, атте, анне,
Кукаçипе кукамай,
Пĕчĕк шăллăм Микулай.
Эпир туслă пурăнатпăр,
Ĕçлеме те юрататпăр.
Вăй хуратпăр тăрăшса,
Савăнса çеç пурăнма!
**Валерия Иванова.**
**Çĕнĕ Шупашкар, 8-мĕш шкул.**

Пирĕн çумри вăрманта
Шăпчăк кайăк пурăнать.
Çепĕç юрă юрласа
Пирĕн чуна хăпартать.
**Татьяна Алексеева.**
**Шупашкар, 50-мĕш шкул.**

Йывăçсем ыйхăран вăранаççĕ,
Симĕс çулçă кăларма тытăнаççĕ,
Кайăксем кăнтăртан таврăнаççĕ,
Йăвасем çавăрма тапратаççĕ.

Юр та ирĕлсе пырать,
Шăнкăртатса вăл юхать,
Ачасем урама çеç васкаççĕ,
Шыв юххипе кимĕсем яраççĕ.
Пурте, пурте савăнаççĕ!
Çуркуннешĕн хĕпĕртеççĕ!
Хĕвел ăшшипе киленеççĕ,
Çулла килессе кĕтеççĕ.
**Даниил Иванов.**
**Шупашкар, 61-мĕш шкул.**

Çу кунĕсем çитсенех,
Хурăн çырли пиçсенех
Эп çӳретĕп вăрмана
Тутлă çырла пуçтарма.
Юрататăп çырлине
Лайăх пиçсе çитнине.
Эп паратăп аннене
Пылаккине, тутлине.
**Данил Николаев.**
**Çĕнĕ Шупашкар, 9-мĕш шкул.**

**Шăллăм**
Пĕчĕккĕ, хастар, маттур
Ман юратнă шăллăм пур.
Шăрçа пек ик куçĕ пур,
Чĕкеçĕн пек чĕлхи пур.
Ташлать, вылять, сиккелет –
Пире те пĕрле чĕнет.
Кунĕпе чупать çапла –
Малалла та каялла.
Савăнтар пире ялан –
Садикра, кайран шкулта.
Эсĕ пĕчĕккĕ паян,
Сиккелен унта-кунта,
Тата темиçе çултан
Пысăк çын пулса тăран.
Ак вара савăнтаран
Эс пире пĕтĕм чунтан!
**Артур Никифоров.**
**Шупашкар, 40-мĕш шкул.**

Аннеçĕм ман чи илемли,
Чи маттурри, чи сăпайли.
Эпĕ лайăх вĕренни –
Çакă вăл телей тени.
**Кирилл Якухин.**
**Çĕнĕ Шупашкар, 9-мĕш шкул.**

Ирхине ирех тăратăп,
Хамах эпĕ çăвăнатăп,
Вылямас пуканипе,
Вылямас машинипе,
Тытап алла кĕнеке
Вĕренеп сас паллине.
Эпĕ пысăк хĕр ача –
Çиччĕ тултаратăп-çке!
**Кристина Александрова.**
**Канаш районĕ, Катек шкулĕ.**

Пĕчĕк çеç кушак çури
Темшĕн макрать çав тери:
– Мяу, мяу! – тет пĕрмай.
– Çиес килет çав тери.
**Владислав Яштаков.**
**Çĕнĕ Шупашкар, 20-мĕш шкул.**

Пахчара ялта çарăк çитĕнет,
Асанне уншăн питĕ хĕпĕртет.
Эпĕ çарăка шăваратăп, çумлатăп,
Кĕркунне вара çисе савăнатăп.
**Николай Сергеев.**
**Çĕнĕ Шупашкар, 8-мĕш шкул.**

Çурхи вăрман вăранать,
Симĕс курăк ешерет.
Ман юратнă чиперук
Шурă лантăш çитĕнет.

**Аделина Димитриева.**
**Шупашкар, 61-мӗш шкул.**

Васкамасӑр шурӑмпуҫ хӑпарать,
Сар хӗвел кулса шуса тухать.
Вӑл ӑшӑ шевлине сапса,
Питрен хуллен ҫупӑрласа
Вӑратать пире хаваспа.
Яланах пуҫлатӑп эпӗ ҫӗн куна
Ырӑ ир сунса та тулли кӑмӑлпа,
Шкулалла эпӗ васкатӑп,
Хама пит аван туятӑп,
Пурӑннишӗн савӑнатӑп.
**Екатерина Пушкина.**
**Шупашкар районӗ, Хыркасси.**

Кар-р-р! Кар-р-р! Кар-р-р!
Кранк! Кранк! Кранк!
Кранклатать хура курак.
Йывӑҫ ҫинче вӑл ларать,
Ҫуркуннешӗн савӑнать.
**Елена Егорова.**
**Шупашкар, 4-мӗш гимнази.**

Юрататӑп чӗререн
Хамӑн капӑр аннене!
Саламлатӑп эп чунтан,
Эп пурнатӑп – эс пуртан.
Пултаруллӑ пул ӗҫре,
Пулӑш тӑтӑш ҫынсене.
**Алеся Колсанова.**
**Елчӗк районӗ, Елчӗкри вӑтам шкул.**

Ман юлташӑм Поля пур –
Тӳрӗ кӑмӑллӑ, маттур.
Шкулта лайӑх вӗренет,
Пӳлӗмӗнче тирпейлет.
Ялан мана пулӑшать,
Ырӑ сӗнӳсем парать.
**Ольга Барсукова.**
**Ҫӗнӗ Шупашкар, 9-мӗш шкул.**

Ҫурхи кунсем пуҫлансан
Ҫут ҫанталӑк чӗрӗлет,
Хурт-кӑпшанкӑ вӑрансан
Шӑнкӑрчӗ вӗҫсе килет.
Пахчара та уй-хирте
Ир те, каҫ та ӗҫ вӗрет,
Ял хыҫӗнчи айлӑмра
Ҫӗнӗ трактор кӗр! кӗрлет.
Сарӑ пылне пухасшӑн
Вӗлле хурчӗ сӗр! сӗрлет,
Ҫеҫпӗл ҫеҫкине ҫурсан
Вӑрмана илем килет.
Килсе ҫитрӗ ҫуркунне
Савнӑ Чӑваш ҫӗр-шывне,

Курăр, туссем, çурхи кун
Тăвать куллен хăй ĕçне!
**Арина Оипова.**
**Çĕмĕрле, 3-мĕш шкул.**

Мана анне парнелет
Ялан хитре парнесем.
Эпĕ ăна юрататăп
Уншăн мар, пĕлсем.
Аннене уçса паратăп
Хамăн вăрттăнлăхсене.
Ăна эпĕ юрататăп
Уншăн мар, пĕлсем.
Аннене пит юрататăп,
Вăл – чи çывăх тус.
Унпа пулма тăрăшатăп
Ăна йывăр чух.
**Илья Шепилов.**
**Шупашкар, 6-мĕш шкул.**